**Тăванран та тăван**

Эс, çуралнă çĕршыв, тăванран та тăван, —
Тăванран уйрăлан — уйрăлмастăн санран.
Эп ăçта — çавăнта эс пыран,
Юррăмсем çук çĕрте эсĕ юрă пулан,
Пурнăç йӳçĕ пулсан — эсĕ тутлă тăван,
Эс, тăванăм, çĕршыв, тăванран та тăван.

Эс, çуралнă çĕршыв, тăванран та тăван, —

Килйышран уйрăлан — уйрăлмастăн санран.
Эп ăçта — çавăнта эс пыран,
Тăвансем çук çĕрте эс тăванăм пулан,
Çулĕ йывăр пулсан — эсĕ çăмăл тăван,
Эс, тăванăм, çĕршыв, тăванран та тăван.

Эс, çуралнă çĕршыв, тăванран та тăван,
Салтак турăн пулсан — эсĕ паттăр тăван, —
Эп ăçта — çавăнта эс пыран,
Юнăм юхрĕ пулсан — ху юнна эс паран,
Пурнăç татнă çынна çĕнĕрен çын тăван,
Эс, тăванăм, çĕршыв, тăванран та тăван.

Эс çуралнă çĕршыв, тăванран та тăван.
Çĕрпеле уйрăлсан та, уйрăлмастпăр санран,
Эп ăста — çавăнта эс — пыран,
Çăлтăрсем тӳпинче эсĕ çăлтăр пулан,
Çăлтăр çулĕ паран — пурнăç çулĕ тăван,
Эс, тăванăм, çĕршыв, тăванран та тăван.

*Урташ, В. Тăванран та тăван : [сăвă] // Урташ, В. Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран : сăвăсемпе поэмăсем / В. Урташ. – Шупашкар, 1983. – С. 7-8.*